Георгий Орлов

## Хусанкайпа пĕрле

Клубра никам та юлмарĕ, тейĕн. Пĕр уçă сасă кăна илемлĕ-илемлĕ янăрать. Ку вăл Чăваш халăх поэчĕ Петр Петрович Хусанкай сăвă калать. Ватă-и, çамрăк-и е вĕт-шакăр - пурте ним тапранмасăр лараççĕ, юратнă поэтăн кашни сăмахне, кашни хусканăвне яланлăхах астуса юлма тăрăшаççĕ пек.

Сасă, çил варкăшĕ пек, ăша уçăлтарать, вăй-хал парса чуна çĕклентерет:

Çак кунччен упраннă халăх
Мăшкăлланмĕ паянтан;
Хăйшĕн хăй - парне те палăк,
Пуринпе те вăл пĕр тан.
Пĕтĕм пурнăç терчĕпе
Çĕр çыртса тупа тăватпăр:
Шăрăх, сивĕ е йĕпе -
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!..

Акă сасă кĕвви улшăнать:

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш,
Эс ан çуйăх, ан çухраш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш...

Унтанпа чылай çул иртрĕ ĕнтĕ. Сăнарĕ халь те куç умĕнчех. Курса калаçнисем, пĕрле çӳренисем, час-часах аса килсе, ялав пекех, чунра ыră-ыră туйăм хускатаççĕ. Манăн тата вăл хăй пултарулăхĕн юлашки тапхăрĕнче çырнă произведенисенчен нумайăшне, унăн тăвакă кĕнекине редакцилеме тиврĕ. Çавăншăн, паллă поэтпа, теплерен тенĕ пек, çумма-çуммăн ларса ĕçлеме тӳрĕ килнĕшĕн, эпĕ хама çав тери телейлĕ тесе шутлатăп. Юнашар ирттернĕ мĕнпур самантах палăртса хăварма, тен, кирлех мар та, хăшĕ-пĕри çинчен каламаллах пуль.

...1950 çул. Май уйăхĕн хĕвеллĕ, ăшă кунĕ. Эпĕ, комсомол ĕçĕпе Кӳкеçрен пĕр яла кайма тухнăскер, Шупашкар хулинчи Ленин урамĕпе (халĕ вăл «Нижегородская» ятлă, чăвашла эппин: Чулхула урамĕ) тăвалла утатăп. Сывлăша çĕмĕрт çеçки шăрши сарăлнă. Иртен-çӳрен питĕ сайра та, ура сасси таçтанах илтĕнет. Акă пĕр çын мана хирĕç анать, кăштах уксахлать. Туяпа хăй. Кам? Тахçан курнă пекех. Эх, эп те çав, Хусанкай-иç ку!

— Якур-çке! Чипер-и? - Петр Петрович та палларĕ мана, алă пачĕ. Кĕçех вăл ял халăхĕн пурнăçĕ, яш-кĕрĕмĕн шухăш-кăмălĕ, райком ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ыйтма тапратрĕ. Çаплаччĕ: тĕл пулнă çынпа вăл калаçма, унран мĕн те пулин çĕннине пĕлме юрататчĕ.

— Çамрăклăх - чи ырă вăхăт, - сасартăк сăмах хушрĕ вăл. - Манăн ав инкек те тупăнчĕ ун чухнех. Уншăн халăх айăплă мар... Çĕнĕ ăрусен вăл ялан хĕвеллĕ пултăрччĕ.

Çав самантра унăн сăнĕ, унччен хаваслăхпа çуталнăскер, самаях тĕксĕмленчĕ. Çапах та кăмăл хусканăвĕн салхулăхне сирсе яма вăл часах вăй тупрĕ. Кунта, сăмах май, çакна хушса хуни те ытлашши пулмĕ: Хусанкай йывăр вăхăтра та хăйĕн тунсăхне, кичемлĕхне палăртсах каймастчĕ, ялан пекех хастаррăн курăнма тăрăшатчĕ. Ку ĕнтĕ вăл питĕ тӳсĕмлĕ, вăйлă чун-чĕреллĕ çын пулни çинчен калать.

— Утмасăр йĕр хывăнмасть. Ĕçле-ха. Çыр. Тăрăш! - сĕнчĕ Петр Петрович мана. - Халĕ май çук, тетĕн. Каялла килнĕ чух кĕме ан ман. Эпĕ ав çавăнта пурăнатăп, - инçех мар икĕ хутлă йывăç çурт еннелле пуçне сĕлтсе илчĕ вăл, хваттер номерне пĕлтерчĕ. - Пӳлĕмĕ пĕчĕккĕ кăна та, иккĕн ларса калаçма вырăн тупăнать. Халь пичет çуртне, кĕнеке издательствине, каятăп-ха. Республика юбилейĕ çывхарать. «Евгений Овегин» романа чăвашла кăларасшăн та, темле, те ĕлкĕретпĕр... Эпĕ таврăннă çĕре, тен, эс те çитетĕн.

Пĕрремĕш хут эпĕ Хусанкая 1949 çулта, август уйăхĕнче, курнăччĕ. Ун чух Чăваш писателĕсен Союзĕнче манăн сăвăсене тишкерчĕç. Хусанкай та сăмах каларĕ. Канашлу хыççăн вăл, таçта васкамалла пулнипе, хăвăрт тухса кайрĕ те, пирĕн уйрăммăн калаçма май килмерĕ. «Тĕл пулăпăр-ха», - терĕ кă-на вăл, алă тытсах сывпуллашса. Çур çултан, ак, тĕл пултăмăр.

Аллăмĕш-утмăлмĕш çулсенче эпĕ Петĕр Хусанкайпа сахал мар курнăçнă, сахал мар калаçнă, çапах та çав тĕлпулу, иккĕмĕш тĕлпулу, асра нихçанхинчен те вăйлăрах ӳкерĕнсе юлчĕ. Поэтăн ăшă кăмăлĕ, тараватлăхĕ, ырă ĕмĕчĕ, кăштах палăрнă тунсăхĕ те - пурте килĕшрĕç. Халĕ те, Хусанкай тесессĕн, час-часах ăна эпĕ нимрен ытла çав вырăнта, Шупашкарти кивĕ пасар урамĕнче, куратăп. Çийĕнче ун якалса шупкалнă сарăрах сăран пиншак, ăна йӳле янă. Ботинкисем те тĕксĕм сарă, кивĕ. Симĕс галифеллĕ брюкийĕ вара салтакран илсе килниех пуль. Вăл та тĕссĕрленнĕ. Тата, çитменнине, вăтăрмĕш çулсенчи танкистсем пек, крагăпа. Мĕн тăвăн! Çапла, вăрçă хыççăнхи пурнăç йывăрлăхĕ халăх тумĕнче (çав шутра - ятлă çынсен çипуçĕнче те!) яр-уççăнах палăратчĕ.

Нимрен ытла ун чух мана, пĕрремĕш сăвăсен авторнех, Петр Петрович Хусанкай: «Çыр. Тăрăш!» тени тĕлĕнтерчĕ. Вăл манран тем кĕтнĕ пек те, хушнă пек те туйăнчĕ, ĕçлеме хавхалантарса, ĕмĕтĕме çунат сартарчĕ.

Тăван поэзие Хусанкай пĕтĕм чунан, сĕрепсĕр хытă юрататчĕ, вăл епле пуянланса, вăйланса пынине сăнасах тăратчĕ. Чăваш поэчĕсен кĕнекисене, хаçат-журналти сăввисемпе поэмисене вăл пĕрне те вуламасăр хăвармастчĕ пуль, тата, ялан пекех, вĕсемпе çийĕнчех, пичетленсе тухнă-тухманах, пал-лашма ĕлкĕретчĕ. Вăхăт мĕнле тупнă вăл? Ăнланма хĕн. Произведени килĕшсен, вăл ăна хăй ăшĕнче (вăрттăн тенĕ пек) çех мухтамастчĕ, халăх хушшинче те - пĕр-пĕр ларура, канашлура е пухура - мĕнле те пулин май тупса, кашни илтмелле ырласа, авторĕ ячĕпе ăшă сăмах каласа хăваратчĕ-хăваратчех. Çапла, ман шутпа, вăл пархатарлă икĕ ĕç тунă: лайăх сăвă е поэма авторне хавхалантарнă, унпа пĕрлех тата ыттисене те çавăн пек çырмашкăн пĕр-пĕринпе ăмăртма чĕннĕ.

Усаллине тиркессинчен те Хусанкай нихçан пăрăнман. «Пиçмен» сăвă е поэмăшăн кăна-и - кашни илемсĕр строфашăн, чухăн рифмăшăн, пăсăлнă ритмшăн вăл чăтма çук пăшăрханнине, тарăхнине те эпĕ самай асăрханă. «Вулакана хисеплес пулать», - тетчĕ вăл çавăн пек чух. Ăнăçсăр йĕркесен авторĕ ватă-и е çамрăк - никама та вăл каçармастчĕ. Хирĕçмелле мар, шухăшне кирек хăçан та тĕслĕхсемне çирĕплетсе, хăюллăн критиклетчĕ. Çав хушăрах вăл хăй критиклекенĕн çынлăхне пачах тĕкĕнмен, унăн ятне тасах хăварнă. Вăл, ырă кăмăллă этем, яланах халăх хуйхи-суйхипе, общество интересĕсемпе пурăннăскер, ĕçе урăхла тума та пултарайман: пĕр-пĕр поэтăн начар енне пысăклатса, намăслантармалла кăтартас тĕллевпе мар, унăн пултарулăхĕнчи кăлтăксене палăртса, ыттисене çавăн пек çитменлĕхсенчен хăтарасшăн, тăван литературăва хăватлăнрах мала ярасшăн çеç тăрăшнă.

Пĕррехинче, 1958 çулта, Чăваш писателĕсен пиллĕкмĕш съездĕнче, - ăна эпĕ нихçан манаймăп! - мана та Хусанкайран хытах лекрĕ.

Съезд Советсен çуртĕнче, пысăк залра, уçăлнăччĕ. Эпĕ, Горький хулинче вĕренекен, кăштах кая юлса çитрĕм. Правлени отчечĕ пĕтнĕччĕ ĕнтĕ. Тӳрех, алăка уçнă-уçманах, Хусанкайăн çирĕп сасси илтĕнсе кайрĕ. Ăнлантăм: вăл, чăваш поэзийĕ çинчен доклад тăваканскер, эпĕ юратакан пĕр поэтăн поэмине тишкерет-мĕн. Илемлĕ, килĕшӳллĕ тĕслĕхсем илсе кăтартать. Акă, сисетĕп, çитменлĕхсем патне куçрĕ: «...рифмăсем... тĕлĕ-тĕлĕпе ытла та йăваш: виççĕн - иртеççĕ, Тарас - тăрать, уйăх - ыйăх... илчĕ - асилчĕ. Юлашки рифмине курсан, Георгий Орлов та, - терĕ вăл, манăн чĕреме шартах сиктерсе, - хăйĕн мĕскер - темскер, кам - такам

рифмисене ăнăçлă тесе шутлама пултарать... Батальонĕ - юнĕ, телефон - ун йышши рифмăсем мана хама темле ар та мар, арăм та мар арçурилле ăçти çуксем пек туйăнаççĕ. Хăтăласчĕ çавсенчен».

Ку цитатăна илсе кăтартмасан та юратчĕ те, çамрăк сăвăçсемшĕн вăл усăллă пулассăн туйăнчĕ. Антив, Хусанкайăн çав сăмахĕсене пурте асрах тытчăр. Шел, хаçат-журналта, сăвă кĕнекисенче çавăн евĕр янăравсăр, начар йĕрке вĕçĕсене халь те çине-çинех курма тивет. Хăшпĕр авторсем, сăвă техникине пĕлсех каяйманнисем, чăн та, хăйсен çитменлĕхĕсене сисмеççĕ, туймаççĕ; теприсем вара, ăна-кăна кăштах ăнкарсассăн та, вĕсемпе çырлахма пăхаççĕ. Ун пек-кун пек чух та асли юлташла асăрхаттарни, ăс парса хăтăрни шутсăр кирлĕ.

Критик - эмел, теççĕ. Ку çаплах ĕнтĕ. Анчах, чылай эмел пекех, вăл йӳçĕ. Ак ĕнтĕ мĕншĕн, вăл темĕнлех усăллă иккенне пĕлсен те, кăмăлсăррăн, ирĕксĕр йышăнатăн. Хăшĕ-пĕрисем, уйрăмах - çамрăксем, ăна пачах тӳсеймеççĕ, хирĕçеççĕ. Тунмастăп, эп те ун чух Хусанкай хам пирки каланă сăмахсене хапăл тусах кĕтсе илмерĕм. Çитменлĕхсене вăл ӳстерсе тиркенĕ пек, ытлашши эмел ĕçтернĕ пек туйăнчĕ. Шухăшра унпа вĕчешсех ӳкрĕм.

Туйăм пăлхавăвĕ хăçан канăçланатчĕ - пĕлместĕп, телее, тăхтавра мана, хăй еннелле ӳпкевлĕн пăхакана, Хусанкай асăрхарĕ.

— Эсĕ килнĕ-çке! Хăçан? - терĕ вăл, хăй тăнă ушкăнран ман пата тухса. - Итлерĕн-и? Ан кӳрен. Хаяр сунса мар, сана юратса каларăм.

Хулран тытрĕ, çавăтрĕ. Фойере мана хуллен уткаланă май, эпĕ мĕнле вĕреннипе, мĕн çырнипе, Горький хулинчи хыпарсемпе кăсăкланчĕ. Ытахальтен мар, хисеплесе, килĕштерсе пупленĕн туйăнчĕ вăл мана. Чăн та, çав туйăм ăшăмра çăмăллăн халланмарĕ. Çакă хаклă: Петр Петровичран эпĕ çав тăхтаврах, шартлама сивĕрен ăшă пӳрте кĕнĕ пек, ăшăнса, палăрмаллах çаврăннă кăмăлпа уйрăлтăм.

Чăн сăмах та тепĕр чух суя пек илтĕнет, чуна сивĕтет. Хусанкай хăй критикин тĕрĕслĕхне аргументсемпе, культурăлахпа, çынпа çын пек пулнипе ăшăтма пултаратчĕ.

Хисеплекене хисеплеме, пулăшу кирлине пулăшма та вăл çав тери хапăлччĕ.

Туслăх кĕнеки - парне,  
Çавăтар-ха пĕр-пĕрне!

Çавăн пек йĕркесем çырса парнелерĕ мана 1967 çулта аслă поэт хăйĕн пĕр кĕнекине. Тĕрĕссипе каласан, мана вăл унччен çавăтнăччĕ теме те юрать. Эп çырнă произведенисене вăл сахал мар тишкерчĕ, хак пачĕ. Унăн хăшпĕр

сăввисем, поэмисем, пысăк алçырăвěсем те набора ăсаниччен, кěнеке хапине иличчен манăн алă витěр тухрěç.

1960 çулта, эпě хăйěн поэмине редакциленě вăхăтра, ятлă сăвăçах мана, ăнсăртран пек, çапла каланăччě: «Эсě мěн тиркетěн, лайăхлатма сěнетěн - эпě юсатăп, ну... Хусанкай вăт итлемест. Редактора йывăр унпа». Çакăн хыççăн шăп тепěр çултанах Хусанкайăн «Лирика» алçырăвне манăн редакцилемелле пулчě те. Вуларăм. Шухăша Петр Петровича пěлтертěм. Килěшě е килěшмě? Иккěленетěп. Эпě кăранташпа хуллев çеç, хăюсăррăн пск, палăртнă вырăнсене (уйрăм сăмах çаврăнăшěсене, ритм улшăннă йěркесене т. ыт. те) вăл тěплěн пăхса тухрě те ним хирěçмесăрех тӳрлемте тытанчě, «Хам асăр-хайман, эсě курнă ав, - терě вăл хăшпěр кăлтăксем пирки.—Тавтапуç, Якур шăллăм». Темиçе сăввине вăл каялла илчě, кěнекене кěртмерě.

«Лирика», Хусанкайăн эпě редакциленě пěрремěш кěнеки, 1962 çулта тухрě. Петр Петрович мана та парнелерě ăна. Унăн титулěнче - вăл сăвăланă виçě йěрке:

Тавтапуç сана, Якур!
Нимěнле хěн-хур ан кур!

Урăх ним те çук. Хусанкайăн ăшă кăмăлě, çынна ыră сунни çакăнтах яр-уççăн курăнать.

Хăйěн кěнекисене типтерлě кăларассишěн те вăл канăçсăрланатчě. Ку ěнтě пуринчен ытла, ман шутпа, вăл пысăк культурăллă поэт пулнинчен, произведенийěсене тулашěнчен те хитре кăтартма тăрăшнинчен килнě. Авантитула, титула мěнле илемлетесси кăна мар, текста мěнле гарнитурăпа, мěнле кегельпе наборласси те ăна шутсăрах кăсăклантарнă. Ăнсăртран пěр-пěр сăмах йăнăш çапăннине те тӳсме пултараймастчě. Çавăнпа вăл алçырăвне, корректурăна та яланах тěплěн вулатчě, вулаймасан -пăшăрханатчě. Кашни кěнекишěнех çавăн пек ăшталанатчě. Çапах унпа ěçлеме питě çăмăлччě. Пěрне-пěри ăнланманни пирěн нихçан та пулман.

Хусанкай никама та кěçěне хумастчě пуль. Эпě сисмен. Мăнкăмăллă мар, хăйне вăл сăпайлă тытатчě.

— Якур! Мěн те пулин кунта, тен, пур, - терě вăл, эпě редакциленě «Савни» ятлă кěнекине мана парнелесе. Уçатăп - пěрремěш страницăра та çав йěркесемех. Тěлěнтěм. Ара, унта калама çук илемлě, чăн-чăн лирикăлла сăвăсем нумаййине пěлместěп-и! Вěсемшěн такам та савăнě. Авторě, ав, именет пек.

Темěнле тěреклě, çирěп юман та пач хумханмасăр лармасть. Хусанкай та пěррехинче самаях пăшăрханчě. 1967 çулта, çу пуçламăшěнче, мана, «Ялав»

журнал редакцийӗнче ӗçлекене, вăл хайӗн произведенийӗсене, «Çӗрте те çӗрместпӗр» поэмине, парса хăварчӗ. Поэми пысăках мар, вăтăр страница–яхăн кăна. Ăна ырласа, пичете яма сӗнсе, тăвата çын - ятлă-сумлăскерсемех! - алă пуснăччӗ. Мана вăл кăштах калăпласа çитеймен пек туйăнчӗ. Вулаканăм тӗрӗс ăнлантăрччӗ. Кунта эпӗ хама ыттисенчен - Хусанкайран та! - ăслăрах пек кăтартасшăн курнăçланмастăп. Çук! Çакна çеç асăрхаттарса хăварас килет: тепӗр чух халь те хăшӗ-пӗрисем, юлташа кӳрентерес мар тесе, хавшакрах произведенисенех (темӗнле талантăн та шăйрăксем пулма пултараççӗ!) мухтама пăхаççӗ. Ку, паллах, автора ырă тунă мар, редакцисен ӗçне те вăл чылай кансӗрлет. Пӗтересчӗ ун пек йăлана!

«Çӗрте те çӗрместпӗр» поэмăра (тӗрӗссипе: унăн çав - малтанхи! - вариантӗнче) мана нимрен ытла Иванов Прахвур сăнарӗ çырлахтарайманӗ: вăл самаях шупкаччӗ. Вăйлатас пулсан, ăна çапăçура лайăхрах кăтартмал-лаччӗ. Салтакăн паттăрлăхӗ урăх ăçта витӗмлӗн палăрӗ!

— Çапла ӗнтӗ, - салхуллăн хуравларӗ Хусанкай мана тăнласа пӗтерсен. - Малтан Мускавра - вырăсла! - кăлармалла. Кайран тин Шупашкарта, тен, тухӗ.

Пӗлеттӗм-ха эпӗ: кăмăлсăр чухне çеç Хусанкай çак сăмахсене калатчӗ. Хама, айăпланнă пек, аван мар туйсах юратнă поэта лăплантарма хăтлантăм:

— Тиркесе мар, çынсем тиркемелле ан пултăр тесе кăна, Петр Петрович, ăна эп кăштах юсаттарасшăн.

Хусанкай, пӗр хушă чӗнмесӗр тăрсан, пуçне йывăррăн çӗклерӗ те:

— Темле çав, - терӗ. - Вăл хамăн ача пекех те, юрататăп... Халӗ кăшт урăхлатма та хал çитмест. Тен, каярахпа - çур çултан е çулталăкран, пӗлместӗп: хăçан? - тепӗр хут пăхса тухăп-и. Шантармастăп...

Телее, çур çул е çулталăк мар, икӗ уйăх та иртмерӗ, июль вӗçӗнче «Ялав» редакцине Хусанкайран ман ятпа бандероль килчӗ. Ăна Мускавран янă (Шупашкарта Петр Петрович юлашки çулсенче сахал пурăнчӗ, çӗршыв тăрăх тек-текех çӳрерӗ). Юсанă «Çӗрте те çӗрместпӗр» поэмăпа пӗрлех çыру та пур. Вулатăп:

«Якур шăллăм!

Хама хам туласа пуранни çитет пулӗ... Халлӗхе калăпланса çитнӗн туйăнать. 800 йӗрке çукрах. Çапах та пӗр номере ярсан аванрах пулмалла пек. Укçи-качкишӗн пулсан - йӳнӗрех тӳлесе йӳнеçтерме пултаратăн. Эпӗ кӳренекенни те, хаклашаканни те мар. Ку ыйту татăклă пултăр. Пурăнатпăр-ха!

Чăвашла машин хампа пулмарĕ. Пичетлеттерсе ил ĕнтĕ тĕлĕ-тĕлĕпе. Малти 3 стр. - алăпа çырни - пĕрремĕш сыпăкĕ умĕн, ячĕ хыççăнах, каймалласкер. Вара тата вунпĕр сыпăк - юрă пекки.

Эпĕ августăн çурринче çитмелли çын. Чиперех пулсан. Йышна - килтине те, редакцирине те - салам-кала».

Тинех ăш выртрĕ! Савăнтарчĕ ку çыру мана. Поэми те килĕшрĕ. Чăн та, унăн юлашки вариантĕнче «800 йĕрке çукрах» мар, тăхăрçĕр йĕрке ытларахчĕ. Вăл самаях пысăкран «Ялав» журналăн пĕр номернех кĕреймерĕ, икĕ номерĕнче (6-мĕшпе 7-мĕш, 1968 ç.) пичетленчĕ (Хусанкай ун çинчен малтанах пĕлтернĕччĕ, вăл килĕшрĕ). Каярахпа ăна, çак вариантах, Александр Казаков тăлмача, чылай çул хушши Петр Петровичпа çывăх пулнăскер, вырăсла куçарчĕ.

Хусанкай лайăх та нумай çыратчĕ. Тата вăл нумай вулатчĕ. Ытти республикăсемпе ют патшалăхсенчи хаçатсемпе журналсене те вăл пайтах илсе танă. Килĕшнĕ хăшпĕр произведенисене вăл куçарнă та. Чăваш çĕр-шывĕн хуçалăхĕпе культуринчи çитĕнĕвĕсем çинчен калакан вырăсла е урăх чĕлхепе тухнă статьясемпе те вăл тăван халăха, чăвашла вулакана, мĕнле те пулин паллаштарма пикенетчĕ.

1964 çулта, çапла, Чăвашра пулса кайнă Ангел Тодоров, Болгари Халăх республикин паллă поэчĕ, «Болгаро-советска дружба» журналта статья кăларнă. Хусанкай ăна вуласа тухнă та «Ялав» редакцине йăтса килчĕ.

— Куçарсан, халăхшăн, туслăхшăн усăллă пулас пек.... Пичетлесчĕ, -тет. - Тăлмачă тупаймăр-ши? Журналне кунтах хăварăттăм.

— Сирĕнтен ытла кам пĕлтĕр пăлхарла! - хуравлатăп Хусанкая. - Хăвăрах куçарăр ĕнтĕ.

— Шухăшласа пăхас... Мускавравран пĕлтерĕп. Часах вăл çыру ячĕ те. Мускавранах, «Украина» хăна çуртĕнчен.

«Асапланас терĕм, - çырнă вăл. - Хама хам редакцилерĕм. Тен, çĕнĕрен пичетлеттеретĕн машинкăпа? Кĕскетме тиврĕ старик сăмахне. А шел!..

Ноябрь №-не ĕлкĕрейместĕн пуль çав ĕнтĕ. Лайăхчĕ те... Çыравçăсемпе ушкăнпа ӳкернĕ сăнĕ пур Тодоровăн (пресс-конференцинчи), хăйне ярса патăм хам. Çавна тупса ярсан юратчĕ тĕрленчĕкĕ умне... Йывăрланнă пек пултăм. Ватти çитет пуль эсреметĕн»...

Çыру айккине, вĕçне мар, икĕ йĕрке хушса хунă: «Виçĕ конвертпа яратăп, 8 страница. Илнине пĕлтерсемччĕ».

«Виçĕ конвертпа» янă «8 страница» октябрь уйăхĕн юлашки кунĕнче тин çитрĕ. Вăл вăхăта «Ялав» журналăн ноябрь номерне наборланă, верстка тунăччĕ, декабрьпе январь валли те хатĕрлесе пĕтернĕччĕ. Çав сăлтавпах ĕнтĕ Ангел Тодоровăн «Советлă Чăваш çĕршывĕнче» ятлă статйи, Петĕр Ху-санкай куçарнăскер, 1965 çулти февральте çеç тухрĕ. А. Тодоровăн сăнӳкерчĕкне те, Хусанкай сĕннине мар, урăххине, Шупашкарти чугун çул вокзалĕнче, вакун умĕнче, çаптарнине пичетлеме лекрĕ. Унпа та, кунпа та Петр Петрович кăмăллах юлнăччĕ.

Чăн та питĕ йӳрĕк, ырми-канми çынччĕ Хусанкай. Вăл таçта та ĕлкĕретчĕ. Хушнă ĕçе тума, чĕннĕ çĕре кайма яланах хастарччĕ. Хаçата е журнала, радио е телевидени редакцине сăвă е статья питĕ хăвăрт кирлĕ-и - каллех никам та мар, пурне те чи малтан Хусанкай пулăшма васканă, хăйĕн юлашки кунĕччен пекех вăл çавăн пек ĕçлерĕ.

Пурте асрах.

1969 çул. Август. Ноябрь уйăхĕнче Çеçпĕл Мвшшн çуралнăранпа 70 çул çитет - «Ялав» журнала статья кирлĕ. Камран ыйтас? Кам çырĕ? Çеçпĕл Мишши пултарулăхĕпе, паллах, Петр Петрович чăваш поэчĕсенчен ни-хăшĕнчен ытла ĕçленĕ - тĕпченĕ, сăввисене вырăсла куçарнă, вăл çуралнă, ĕçлесе пурăннă вырăнсене темиçе хут та кайса курнă. Çапла та, шел, Хусанкай питĕ йывăр чирлĕ, уçăлми чирлĕ. Кансĕрлеме лайăх мар пек. Тепĕр шухăш та канăç памасть: урăх çынна çыртарсан, Çеçпĕл Мишшине пĕтĕм чунтан юратакан Петр Петрович кӳренмĕ-и? Юлашкинчен, хисеплесе те именсе, чăрмантарнăшăн каçару ыйтса, ун патнех шăнкăравларăм.

— Юрать, - терĕ вăл. - Мĕнле те пулин пулăшăп.

Хусанкай хăйĕн статйине августăн 29-мĕшĕнче илсе килнĕ. Эпĕ çав самантра «Ялав» сулмак. Вăл вара хут татăкĕ çине кăранташпа питĕ вăйсăррăн çапла çырса хăварнă: «Якур! Çакă Çеçпĕл çинчен. Умсăмах е хыççăмах пулмалласкер «Çĕн Кун аки» куçарăвĕсен кĕнекинче. Редакцирен çавна асăрхаттарса çырмалла-и, тен, пĕр-ик сăмах?

Статья Çеçпĕл Мишшине халалланă номертех тухрĕ. «Пин-пин чĕре» ятпа. Хусанкай ыйтнă пекех, умĕн асăрхаттарнине те çыртăмăр.

Çав, «Пин-пин чĕре», Хусанкайăн хай пурăннă вăхăтра «Ялав» журналта пичетленнĕ юлашки статйи пулчĕ.

Ялав. - 1977. - № 1. - С. 20-21.